И.Я. Яковлев çуралнăранпа 165, Н.В. Никольский çуралнăранпа 135 çул çитнине халалласа И.Н. Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕ, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университечĕ, Чăваш Республикин Вĕренӳ институчĕ, Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ, «Хыпар» хаçат тата Чăваш наци радиовĕ « **Пĕтĕм чăваш диктанчĕ** » акци ирттереççĕ. Вăл **2013 çулхи ака уйăхĕн 24-мĕшĕнче** чăвашсем пурăнакан пĕтĕм тĕнчери хулапа ялта иртет. Акцин тĕп тĕллевĕ – чăваш чĕлхин пĕлтерĕшне, сумĕпе хисепне ӳстересси.

Задачисем:

– чăвашла çырма пĕлнине тĕрĕслесси;

– чăвашла пĕлекен кашни çынна хăй тĕрĕс çырма пултарнине тĕрĕслеме май туса парасси.

Диктант текстне чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер хатĕрленĕ.

Акцие икĕ тĕрлĕ хутшăнма пулать.

**1-мĕш вариант.** Хăйсем пурăнакан вырăнтах çырма кăмăл тăвакансем диктант текстне 13.00 сехетре Чăваш наци радиовĕн тӳрĕ эфирĕнче 105 Fm тата 72,41 УКВ хумĕсем çинче итлеме пултараççĕ. Диктант бланкне http://www.chuvsu.ru/index.php?option=com_content&view=section&layout=blog&id=217&Itemid=529 сайтра вырнаçтарнă. Копьютерпа Word форматпа çырнă (наборланă) е алпа çырнă текста сканерпа кăларса диктанта вуласа пĕтернĕ хыççăн 10-15 минут хушшинче **chuv-total-dict@mail.ru** **е** **nradio@mail.ru** адреспа ярса памалла.

**2-мӗш вариант.** Диктант И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗн чӑваш филологи факультетӗнче (Президент бульварӗ, 19а ҫурт, 201-мӗш аудитори) 13.00 сехетре пуҫланать.

Диктант ҫырма кӑмӑл тунисен заявка **chuv-total-dict@mail.ru** е **nradio@mail.ru** адреспа ҫак формӑпа ярса памалла:

Хушамат, ят, ашшӗ ячӗ е вӑрттӑн ят

Миҫе ҫулта?

Пароль (10 сас паллинчен иртмелле мар)

Ӑҫта ҫырасшӑн – Шупашкарта-и е пурӑнакан вырӑнта-и?

Диктант ҫырас умӗн орфографи тата пунктуаци правилисене аса илес текенсем валли «Тӗрӗс ҫырма вӗренер» занятисем иртеҫҫӗ:

– ака уйӑхӗн 20-мӗшӗнче 11.00 сехетре И.Я. Яковлев ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх педагогика университечӗн V корпусӗн (Президент бульварӗ, 19а ҫурт) 201-мӗш аудиторинче;

– ака уйӑхӗн 22-мӗшӗнче 17.00 сехетре И.Н. Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗн I корпусӗн (Шупашкар хули, Университет урамӗ, 38-мӗш ҫурт) 434-мӗш аудиторинче.

Чăваш Республикин патшалăх тытăмĕнче ĕçлекенсем, культурăпа искусство ĕçченĕсем, студентсемпе шкул ачисем – чăваш чунлă мĕн пур çын «Пĕтĕм чăваш диктанчĕ» акцие хутшăнасса кĕтетпĕр.

Ыйтса пĕлмелли пулсан телефон – 45-03-37 (31-02) (10.00 сехетрен пуçласа 17.00 сехетчен шăнкăравлама юрать).

«Пĕтĕм чăваш диктанчĕ» акци çинчен тулли информаци http://www.chuvsu.ru/index.php?option=com_content&view=section&layout=blog&id=217&Itemid=529 адреспа тупма пулать.

**Бланк**